## ХУСАНКАЙПА КАЛАҪНИ

Вӑл ҫулсенче эп ҫамрӑк та айванччӗ:
Ӑнкартаймастӑм пурнӑҫ ҫул-йӗрне.
Чипер чухне — калама ҫук аванччӗ,
Кӑшт хуйхӑпах — шав курнӑ хурине.
Ҫавӑн пек чух, пӗрре ҫинче, эп кайрӑм
Канаш ыйтмашкӑн Хусанкай патне.
Пӳрте кӗрсен, сывлӑх сунса пуҫ тайрӑм...
Вӑл илсе кӗчӗ хӑйӗн пӳлӗмне.
Унран эп ыйтрӑм:— Кам мана вӑй парӗ?
Пурнайӑп-ши эп хампа хам тату?
Куҫран пӑхса мана вӑл хуравларӗ:
— Сана вӑй парӗ
Пурнӑҫ пархатарӗ,
Ҫамрӑклӑхпа хӗрӳллӗ юрату!

— Пурӑнӑҫне эп ӗненетӗп,—терӗм
Унран татах, татах канаш кӗтсе.
Вӑл пӳлӗмре уткаласа ҫӳрерӗ,
Хуллен ҫеҫ сиккелерӗҫ тутисем.
— Чӗре ҫунни, чун ыратни пулать.
Лаша тӑват ураллӑ —
Такӑнать...
Юрат эс, шӑллам, хӑвӑн халӑхна.
Вӑл шанчӑк та, тӗрек те ялана.
— Тӑван ҫӗршывӑм, халӑхӑм чунрах,—
Эп шантаратӑп аслӑ юлташа.—
Анчах та сывӑх тус кирлех ҫумра,—
Тӑсатӑп калас тенӗ шухӑша.

— Кирлех...— тет Хусанкай.— Ҫывӑххине
Мӗнпе эс картса ярӑн ҫамкине?
Ҫапла та пулкалать хӑшпӗр чухне:
Чи ҫывӑххи те — ҫук санпа ҫумра,
Чи инҫетри — тӑрать юнашарах.
Пурӑнӑҫра пур уссӑр хӗвӗшӳ:
Вӑл тӗп ҫултан пӑрӑннинчен килет.
Тӗп ҫулӗ пирӗн ӗҫ те кӗрешӳ —
Ҫапла тӗнчемӗр пирӗн ҫӗнелет...

Ҫак калаҫу ялан умра тӑрать,
Йывӑр килсессӗн — ҫӑмӑллӑх парать.

1970